Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчене тухать

38 (7892) № * Шăмат кун, 2011 çулхи май (çу) уйăхĕн 21-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Ыттисемшĕн яланах тĕслĕх



*Эсир паянхи сăн ӳкерчĕкре Çатракассинчи вăтам шкулти вĕрентекенсен ушкăнне куратăр. Кашниех чĕрĕк ĕмĕре яхăн вĕрентӳ ĕçĕнче. «Ачасене çирĕп пĕлӳ панипе пĕрлех хамăр тавракурăм пирки те манмастпăр. Хăйĕн ĕç ĕмĕрне вĕрентӳпе çыхăнтарнă çыннăн урăхла çул çук», – терĕç эпĕ класа кĕрсен компьютер умĕнчен уйрăлнă педагогсем. Сăмах май малта ларакан Вера Владиславовна Димитриева 23 çул ĕнтĕ ачасене ют çĕр-шыв чĕлхи вĕрентет. Кăçал вăл республикăра акăлчан чĕлхи вĕрентекенĕсен хушшинче иртнĕ конкурсра 10 чи лайăх вĕрентекен йышне кĕрсе лауреат дипломне çĕнсе илнĕ. Унăн ĕçтешĕсем Людмила Геннадьевна Смирновăна (сулахайра) Татьяна Васильевна Алексеева – пуçламăш классене вĕрентекен ăста педагогсем. Ялта та вĕсем пирки ырă сăмах çеç çӳрет. Апла пулсан пирĕн шкулсем çĕнĕлĕхсене йышăнма хатĕр.*

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Сывлăха çирĕплетмелли лагерьсем паллă

**Ачасен çуллахи канăвĕпе сывлăхĕ**

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕнче пĕлтернĕ тăрăх кăçал çулла ачисене лагере ярас текен ашшĕ-амăшĕсенчен 204 заявлени йышăннă. Лагерьсене ятарлă конкурс иртерсе суйласа илессине малараx пĕлтернĕччĕ. Çапла вара лагерьсенчи условисене, унти апатланăва, путевка хакĕсене, ачасемпе ĕçлеме палăртнă программăсене тата ытти енсене тишкернĕ хыççăн комиссии икĕ лагерь суйласа илнĕ. Вĕсем – Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Шурă чулсем» тата пирĕн районти Ильинкăри хула тулашĕнчи сывлăха çирĕплетмелли «Ильинский» лагерь. Комиссии икĕ лагерĕ те лайăххине палăртать.

Путевка хакĕсем пирки калас пулсан вĕсем ытлах уйрăлса та тăмаççĕ: «Шурă чулсем» лагере каяс текенсен 810 тенкĕ, Ильинкăра канас текенсен 799 тенкĕ тӳлемелле. Аса илтерĕпĕр, çак хак – путевка хакĕн 10 проценчĕ чухлĕ. Ашшĕ-амăшĕн ăна лагере кайма район администрацийĕн вĕрентӳ пайне путевка патне пынă чухне тӳлемелле. Тата хăврăпа пĕрле ачан обязательнăй медицина страховани полисне, унăн копине илсе пыма ан манăр.

Лагере каяс умĕн (справка 5 талăк вăйра) ачасен медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухмалла. Санэпидемстанцире ирттерекен тĕрĕслев кăтартăвĕсем икĕ талăк вăйра пулнине шута илме ан манăр.

Лагерьсенче пĕр смена 21 куна тăсăлать. Çапла вара сменăра малараx асăннă хакпа ачасене кантарнăшăн, вĕсен сывлăхне çирĕплетме майсем туса панине шута илсен çак укçа калăпăшĕ пĕрре те пысăк мар. Лагерьсенче кунне пилĕк хутчен апатлантараççĕ.

Çуллахи вăхăтра лагерьсенче тăватшар смена йĕркеленĕ. 1-мĕш смена – июнĕн 1–21-мĕшĕсенче, 2-мĕш смена – июнĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 14-мĕшĕччен тăсăлать, 3-мĕш смена – июлĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа августăн 6-мĕшĕччен, 4-мĕш смена – августăн 9–29-мĕшĕсенче. Анчах та каласа хăвармалла, «Шурă чулсем» лагере 4-мĕш смена валли, Ильинкăри лагере 1-мĕш смена валли путевкăсем палăртса хăварман. Çапла вара лагерьсенче пирĕн районти ачасем валли вырăн çителĕклĕ пулать. Тĕплĕнрех çакна пĕлтерме пулать: «Шурă чулсем» лагере кайма 1-мĕш сменăна 59 путевка, 2-мĕш сменăна – 28 путевка, 3-мĕш сменăна 27 путевка уйăрнă. Ильинкăри лагере кайма 2-мĕш смена валли 31 путевка, 3-мĕш смена валли 32 путевка, 4-мĕш смена валли 27 путевка çирĕплетсе хăварнă.

Хамăр районта вырнаçнă Ильинка лагерĕ пирки калас пулсан унта ачасене йышăнма питĕ тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Ачасем каникул вăхăтне усăллă ирттерччĕр тесе интереслĕ те анлă ĕç программисем хатĕрлесçĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Пурнăç уттинчен юлмаççĕ

**Раççей предпринимательствин кунĕ умĕн**

***Çитес кĕçнерни кун Раççейре предпринимательсен кунне паллă тăваççĕ. Районти пĕчĕк тата вăтам бизнес представителĕсем çак куна тивĕçлĕ утăмсемпе кĕтсе илеççĕ. Район администрацийĕн экономика пайĕн ертӳçи Э.И. Симакова палăртнă тăрăх районта пурĕ 132 пĕчĕк тата вăтам предприяти, уйрăм предпринимательсем 823-ĕн, 99 хресчен (фермер) хуçалăхĕ, 16 ял хуçалăх потребителĕсен кооперативĕ. Пĕтĕмпе 2800 çын çак пĕчĕк тата вăтам бизнес сферипе çыхăнтарнă хăйĕн пурнăçне. Вĕсенчен ытларахăшĕ ял хуçалăх (32 процент), суту-илӳпе обществăлла апатлану (30 процент) ĕçне туса пырать. Районти предпринимательсен ĕçĕпе паллаштарнă май Эльвира Иосифовна акă мĕн палăртрĕ.***

– Иртнĕ çул çак пĕчĕк бизнес субъекчĕсем пурĕ 242,9 млн. тенкĕлĕх ĕç тунă, продукци кăларнă. Ку вăл районта туса илнĕ мĕн пур продукцин 25,6 проценчĕ пулать. Ку сферăри вăтам ĕç укçи 8250 тенкĕпе танлашать. Ĕç укçи тенĕрен, пĕлтĕр ĕç укçине пурăнмалли пĕчĕк минимумран кая тӳленĕ 23 предприятие ведомствăсем хушшинчи комиссии ларăвĕнче пуxса тухнă.

Районти предпринимательсем патшалăх грантсене те çĕнсе илеççĕ. Хăйсен бизнесне йĕркелесе яма май паракан патшалăх грантне пĕлтĕр 5-ĕн 600 пин тенкĕлĕх выляса илнĕ тата тепĕр 4-ăн – 1200 пин тенкĕлĕх.

Бизнес ĕçне йĕркелесе ярассинче бизнес-инкубатор та нумай пулăшать.

Иртнĕ çул пурĕ 122 çын унăн пулăшăвне илнĕ, – калаçăва малалла тăсать Эльвира Иосифовна.

2010 çулта ку сферăра 13 çĕнĕ суту-илӳ точки усăлчĕ. Çапла майпа 27 ĕç вырăнĕ тупăнчĕ.

Муниципаллă заказсене пурнăçлассипе те япăх мар ĕçлесе пыраççĕ пĕчĕк предприятисем. Пĕлтĕр 24,3 млн. тенкĕлĕх пурнăçланă вĕсене.

Пĕчĕк тата вăтам предприятисем, уйрăм предпринимательсем тĕрлĕрен конкурссенче те активлăн хутшăнаççĕ. Республикăри халăх ыйтăвне алăри чĕрĕ укçасăр (пластик картăсемпе) тивĕçтерссипе йĕркеленĕ конкурсра Муркашри «Универмаг» чикĕллĕ яваплăхлă общество (ертӳçи – В.Г. Бардасов) 3 вырăн йышăнчĕ. «2010 çулхи чи çамрăк предприниматель» республикăри конкурсра «Бизнесăн çамрăк маçтăрĕ» номинацинче пирĕн районти Е.И. Иванова предпринимателĕн 2 вырăн йышăнчĕ. «Сундырь-Хлеб» (ертӳçи Л.Г. Ильгечкин) тата «Моргауши – Хлеб» (ертӳçи – Е.К. Васильева) чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем çулсеренех республикăри «Пасхальное чудо» конкурсра малти вырăнсене йышăнаççĕ.

Паян вара районти пĕчĕк бизнес представителĕсем çĕнĕлле ĕçлессине тимлĕх уйăраççĕ. Тепĕр задача – производство бизнес-инкубаторне тумалла.

Раççейри предпринимательство кунне вара районти пĕчĕк тата вăтам бизнес çыннисем хăйсем спортра туслипе те çирĕплетсе парасшăн. Майăн 21-мĕшĕнче Муркашри стадионта Муркаш районĕнчи предпринимательсен кубокне çĕнсе илессишĕн мини-футболпа турнир иртет. Майăн 26-мĕшĕнче вара Чăваш Республикинчи Экономика аталанăвĕн, промышленноçть тата суту-илӳ министерстви «Чувашия» ВГТРКпа пĕрле «Чунтан тухакан кĕвĕсем» ятпа телетĕпел иртерет. Ку мероприяти Чăваш патшалăх филармонийĕнче 18 сехетре пуçланать. Республикăри пултаруллă предпринимательсене чăваш эстрада çăлтăрĕсем саламлĕç. Пирĕн районтан та унта 26 предпринимательтен тăракан делегаци хутшăнĕ.

Эппин çывхарса килекен уяв ячĕпе, пĕчĕк тата вăтам бизнес предприятийĕсенче ĕçлекенсем, уйрăм предпринимательсем!

**Л. ПАВЛОВА.**

**Çур аки**

## Район уй-хирĕсенче

Паян ял çыннишĕн хĕрӳ тапхăр. Вăл ир пуçласа мĕн каçчен хиртен кĕмест. Майăн 20-мĕшĕ тĕлне хуçалăхсенче 6610 гектар çурхи культурăсем акса хăварнă. Ку кăтарту малтан палăртнин 77 проценчĕ пулать.

Пĕр çул ӳсекен курăксем 1527 гектар (88 процент) акнă.

Çĕр улми лартас ĕçсем те сарăлса пыраççĕ. Хальлĕхе ăна районĕпе 222 гектар çинче лартнă. Пĕтĕмпе вара «иккĕмĕш çăкăра» 1253 гектар лартма палăртнă. «ВаСем» хуçалăха лайăх енчен палăртмалла. Кунта çĕр улми 90 гектар лартнă.

Пахча çимĕç акасси-лартассипе те тимлет ял çынни. Хальлĕхе ăна 55 гектар (40 процент) акнă-лартнă.

**Вĕрентӳ**

## Майăн 26-мĕшĕнче – пĕрремĕш экзамен

Шкулсенче 11-мĕш тата 9-мĕш классенче вĕренекенсен хĕрӳ тапхăр пырать. Патшалăх экзаменĕсене тытиччен вăхăт сахал юлчĕ.

Патшалăх аттестацийĕн положенийĕпе килĕшӳллĕн 9-мĕш класран вĕренсе тухакансем 4 экзаменран кая мар тата 5 экзаменран ытла мар тытаççĕ. Вĕсен обязательнăй йĕркепе математикăпа тата вырăс чĕлхипе экзаменсем тытмалла. Унсăр пуçне чăваш чĕлхипе те çĕнĕ формăпа экзамен пур. Пирĕн районти 9-мĕш класра вĕренекен пур ача та – 386 выпускник – экзаменсене Мăн Сĕнтĕрти тата Муркашри вăтам шкулсенче тытать. Мăн Сĕнтĕрте – 164, Муркашра – 222 вĕренекен. Экзаменри ĕçсене ЧР Вĕрентӳпе çамрăксен политикин министерстви çирĕплетнĕ территори экзамен комиссийĕсем тĕрĕслеççĕ. Çакă вĕрентĕве тĕрĕс хаклама пулăшĕ.

Пĕрремĕш экзамен майăн 26-мĕшĕнче вырăс чĕлхипе иртет. Математикăпа – июнĕн 2-мĕшĕнче, чăваш чĕлхипе (350 выпускник экзамен тытать) – июнĕн 17-мĕшĕнче.

Ачасем çĕнĕ формăпа экзамен тытма суйласа илнĕ ытти предметсем пирки калас пулсан ӳкерчĕк çапларах. Раççей историйĕпе экзамен 21 вĕренекен тытать, физикăпа – 46, биологипе – 106. Ку экзаменсем июнĕн 7-мĕшĕнче иртеççĕ. Обществознани (72), хими (18), географи (56), информатикăпа ИКТ (4) предмечĕсемпе тата ют çĕр-шыв чĕлхисемпе (4) экзаменсем июнĕн 9-мĕшĕнче пулаççĕ.

Экзамен тытма çакăнта асăннан предмета суйласа илнисем ăна малтанхи пекех йăлана кĕнĕ формăпа тытаççĕ.

Тăххăрмĕшсем валли резерв кунĕсене те палăртса хунă. Вĕсем июнĕн 11, 15, 20-мĕшĕсенче.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Саламлатпăр!**



Юратнă мăшăра, аннене, асаннене – Москакасси ялĕнче пурăнакан **Тамара Яковлевна СМИРНОВĂНА** 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Яланах хавас кăмăл-туйăмлă, çирĕп сывлăхлă пулăр, телейпе ăнăçу ялянах сирĕнпе пĕрле пулччăр, ĕмĕтĕрсем çитсе пулччăр. Эпир сире юрататпăр, хисеплетпĕр, сирĕнпе мухтанатпăр, çĕре çити пуç таятпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, хăтипе тăхлачисем, çывăх тăванĕсем, пускилсем.**



Хаклă мăшăрăма, юратнă аннемĕре тата хунямана, çепĕç чунлă асаннене, ытарайми кукамая – Юнкă ялĕнче пурăнакан **Алевтина Лаврентьевна ЯРГУНЬКИНĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн питĕ пысăк телей. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эпир сана юрататпăр, эсĕ пурришĕн савăнатпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан таталтăр. Ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

Пирĕн юратнă аттене, хисеплĕ хуньăшарике, ырă кăмăллă асаттене – Çатракассинче пурăнакан **Джон Прокопьевич АНИСОВА** 75 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Пурăн ĕмĕр сывлăхпа кăна,
Ырă кăмăл ăшăттăр чунна,
Сывлăх пултăр мĕн ватăличчен,
Пурăнма сунатпăр çĕр çулччен.

Чун юратнă атте, асатте,
Эс салхуллă ан пул нихăçан.
Ăшшăн-ăшшăн кулса кĕтсе ил,
Телейпе, сунатпăр эсĕ пурăн ялан.

**Салампа: ывăлĕпе кинĕ, Романпа Дарья мăнукĕсем.**



Пирĕн юратнă аппа – Пиккикасси ялĕнче пурăнакан **Нина Васильевна КАСЬЯНОВА** паян 60 çул тултарать. Юбилей ячĕпе чĕререн саламласа эпир ăна чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул, юман пек çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана нумай-нумай çул усратăр.

**Пысăк салампа: йăмăкĕсем Римма, Таня, Люда, шăллĕ Володя, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, хăти-тăхлачисем.**

# Фестиваль вĕренӳ çулне пĕтĕмлетрĕ



## Вĕрентӳ тата воспитани

*Майăн 18-мĕшĕнче районта йăлана кĕнĕ Вĕренӳ кунĕ иртрĕ. Вĕренӳ çулне пĕтĕмлетекен уява ачасем кăçал Лантăш вăрманĕнчи уçланкăна пухăнчĕç.*

*Ача-пăча обществăлла организацийĕсемпе пĕрлешĕвĕсен командисем Космонавтика çулне халалланă фестивальте хăйсене пур енлĕн тĕрĕслерĕç, экологи енĕпе те, спортра та, тавçăрулăхпа пултарулăхра та...*

*Район администрацийĕн пуçлăхĕн стипендине тивĕçнисем вара уйрăмах хĕпĕртерĕç. Маларах иртнĕ тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕсемпе конкурссен, олимпиада çĕнтерӳçисемпе призерĕсене те çак савăнăçлă уявра чысласа хавхалантарчĕç.*

*Умра – çуллахи ĕçпе кану тапхăрĕ. Ăна та тивĕçлĕ ирттересчĕ.* **Т. АЛЕКСАНДРОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Паянхи ыйтусене тишкерчĕç

## Информаци кунĕ

**Чăваш Республикинчи хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсемпе ытти техникăна техника тĕлĕшĕнчен мĕнле шайра пулнине пăхса тăракан патшалăх инспекцийĕн ертӳçи – республикăри тĕп патшалăх инженер-инспекторĕ В.П. Димитриев, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов Ильинка ял тăрăхĕнче пулчĕç.**

Ял тăрăхĕн администрацийĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнă май Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю.В. Перцев усă курман çĕрсем хальлĕхе 120 гектар пулнине, кĕркунне вĕсене йăлтах кĕр тыррисем акса хăварассине палăртрĕ. Йывăç лартмалли уйăхлăхра Ильинкăсем 500 ытла йывăç лартса хăварчĕç.

Информаци ушкăнĕ çавăн пекех кунти почта уйрăмĕнче, библиотекăра пулчĕ. Унтан Ильинка шкул коллективĕпе тĕл пулчĕ.

В.П. Димитриев пĕрлехи информаци кунĕн кун йĕрки çинче тĕплĕн чарăнчĕ. Ачасен çуллахи канăвне йĕркелессине республикăра пысăк тимлĕх уйăрнине палăртрĕ. Çакна валли кăçал 285 млн. тенкĕ укçа уйăрнă. 108 пин ача тĕрлĕрен лагерьсенче канĕ. Муркаш районĕнче кăна çуллахи канăва лагерьсене 1749 вĕренекен кайĕ. Çав шутран 204-шĕ хуласем тулашĕнчи лагерьсенче пулĕç. Кăçал Муркаш районĕнчи ачасене хамăр районти сывлăха çирĕплетмелли «Ильинский» тата Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Белые камни» лагерьсем кĕтеççĕ.

Çуллахи вăхăтра çавăн пекех 14 – 18 çулхи ачасем укçа ĕçлесе илме пултараççĕ. Республикăри 5800 ача 6 млн. та 422 пин тенкĕлĕх илĕ патшалăхăн çак пулăшăвне. Пирĕн районпа вара кăçал çул çитмен 265 çамрăк çуллахи ĕçре сывлăхне туптĕ, ĕçлесе илĕ.

Тĕл пулура учительсен ыйтусем те сахал мар пулчĕç. Сĕт литрĕшĕн 9 тенке юлни пăшăрхантарать вĕсене. Чиркӳри хаксем хăпарса кайни те ăнланмалла мар. Вилнĕ çынна кĕл тума 1-1,5 пин тенкĕ тӳлемелле паян.

– Ял çыннишĕн ку çав тери пысăк сумма. Унăн ахаль те хуйхă.., – теççĕ вĕсем.

Шыв ыйтăвĕ пирки те паянах шухăшлаççĕ кунта. Килте туса илнĕ продукцие Шупашкар пасарĕнче сутассипе, вилнĕ çынна кастарассипе, «ача укçипе» çыхăннă ыйтусем те пулчĕç.

Тĕл пулăва вĕçленĕ май район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов пирĕн пурнăç хамăр алăрах пулнине палăртрĕ. Сĕт хакĕ «посредниксен» аллинче хакланса ан кайтăр тесен те выранта пуçарулла пулни кирлĕ. Сĕт пуçтарассипе ял хуçалăх потребителĕсен кооперативне йĕркелени выранлă. Шыв башнисене ял тăрăхĕ çине куçарассипе те çине тăрарах ĕçлемелле тата ытти те.

Унтан информаци ушкăнĕ Тренккăри пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕнче пулчĕ. Кунта ял халăхĕн сывлăхне çирĕплетмелли мĕн пур услови пур. Районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов шăл юсамалли аппарата кăçал улăштарса пама шантарчĕ.

Юн анализĕсене те вырăнтах илеççĕ, ЭКГ та кунтах тăваççĕ. Физиотерапи пӳлĕмĕ те йĕркеллĕ ĕçлет тата ытти те. Кунта ĕçлекенсем те, сипленме çӳрекенсем те кăмăллă.

Информаци ушкăнĕ çак кун «Ильинский» ачасен кану лагерĕнче пулса вăл ачасене кĕтсе илме епле хатĕрленнипе те паллашрĕ. Лагерь ертӳçи И.П. Савельев столовăйĕнче юлашки юсав ĕçĕсем пынине палăртрĕ. Лагерь ачасене кĕтсе илме хатĕрпе пĕрех. Кăçал кунта 4 сменăра 300-шер ача канмалла. «Ильинский» лагерь яланах «кухня» пуяннипе палăрса тăнă: поварĕсем те опытлă, халиччен кунта ĕçленисемех. Пурăнма та, канма та пур услови те çителĕклĕ кунта.

**Л. ТУКТИНА.**

# Пурăнас текен майсем шырать

***Шăпах çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума пултарчĕ информаци ушкăнĕ майăн 18-мĕшĕнче Йӳçкасси ял тăрăхĕн территорийĕнче пулса курнă хыççăн. Ушкăн шутĕнче вара ЧР сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министрĕн çумĕ Н.А. Осипова, аслă професси вĕрентĕвĕн «Мускаври патшалăх усă университечĕн Шупашкарти институчĕ (филиалĕ)» патшалăх вĕренӳ учрежденийĕн директорĕн çумĕ Н.В. Алтынова, ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н.П. Петрова пулчĕç.***

Пĕрлешӳллĕ хуçалăха тăнăç тытса пыма, ял хуçалăх производствине аталантарма паян пĕртте çăмăл мар. «Ударник» хуçалăха 30 çул хушши ертсе пыракан Платон Павлович Давыдов сăмахĕнчен те паян çакна аван туятăн. Чăннипех те унăн чунĕ ыратать ял хуçалăхĕнчи хальхи лару-тăрăва курса. Тĕрĕссипе вара çакăн пек чăн-чăн çĕр ĕçченĕ, пур йывăрлăха та ăшпа туякан çын çинче тытăнса тăрать те паян ял хуçалăхĕ тесе калас килет.

Иртнĕ çулхи çанталăк условийĕсем çĕр çыннишĕн çирĕп тĕрĕслев пулчĕç. Типĕ çанталăка пула выльăх апатне вырăнта çителĕклĕ чухлĕ янтăлама май пулмарĕ. Выльăх-чĕрлĕх йышне сыхласа хăварас тесе улăмне те, уттине те ытти облаçсемпе республикăсенчен сахал мар кӳрсе килме тиврĕ. Укçа çине куçарсан çакă йӳнех кайса лармасть. Утă-улăмне унччен хинчен 3-4 хут хаклăрахпа илсе килни те пулнă. Апла пулин те обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышне сыхласа хăварнă.

Туса илекен продукцие сутакан хаках илер. Акă малтанхи вăхăтра хуçалăх сĕте пĕр килограмшăн 18 тенкĕпе ăсатнă. «Ун чухне тинех кăшт çăмăлрах сывласа ятăмăрччĕ, – каласа парать Платон Павлович. – Халĕ вара сутлăх хак каллех икĕ хута яхăн чакса кайрĕ». Çав вăхăтрах электроэнерги, топливо хакĕсем ӳссех пыраççĕ. Çĕр ĕçченĕн вара çур акине те ирттерес пулать, мĕн акса-лартса хăварнине йĕркеллĕ пăхса ӳстерсе пуçтарса та кĕртес пулать, выльăх-чĕрлĕхне те ĕрчетес пулать.

Апла пулин те Платон Павловичшăн ял хуçалăх производствипе те, укçа-тенкĕ тăкаклассипе те çыхăнман, çапах та чуна ыраттаракан ытти ыйтусем те ют мар. Акă шкулсем валли ятарлă автобуссем уйăрса панă май халĕ ачасене вĕренме ытти ялсенчен автобуссемпе илсе çӳреççĕ. Çав вăхăтрах ача садне çӳрекенсем хĕллехи вăхăтра рейс автобусне кĕтсе çул хĕрринче шăнса тăраççĕ. Мĕн тăвăн, положени, инструкци çапла хушать. Лартма юрамасть. Хуçалăх ертӳçи ку ыйтăва тĕрлĕ шайра темиçе хут çĕкленĕ пулин те лавĕ вырăнтах-ха.

Укçа-тенкĕ перекетлĕвĕ пирки. Çĕнĕ положенипе халĕ пур шкулсенче те медицина персоналĕн ятарлă пӳлĕмĕсем кирлĕ. Йӳçкасси шкулĕнче те ку ыйту тăрать. Пĕтĕм оборудованипе персонал валли укçа-тенкĕ сахал мар уйăрмалла. Çав вăхăтрах пĕтĕмĕшле врач практикин уйрăмĕ юнашарах вырнаçнă. Шкул ачисене кирлĕ медицина пулăшăвĕпе кунта тивĕçтерме май пур. Анчах каллех положени, инструкци...

Информаци ушкăнĕ çав кун хуçалăх хранилищинче çĕр улми вăрлăхне суйлакансем патĕнче, Йӳçкасси шкулĕнче, «Ватă çынсемпе инвалидсен Йӳçкассинчи интернат çурчĕ» республика патшалăх учрежденийĕнче пулчĕ, вĕсен коллективĕсемпе тĕл пулчĕ.

Министр çумне Н.А. Осиповăна интернатри тасалăхпа йĕркелĕх, кунти ĕççене епле йĕркелесе пыни уйрăмах кăмăла кайрĕ. Кунта асăннă учрежденин директорĕн В.Н. Шивиревăн тӳпи пĕчĕк марри паллă. Интернат çуртра хӳтлĕх тупнă ватă çынсем персонал ĕçĕ-хĕлĕпе те, хăйсем тĕлĕшпе епле тимлĕх уйăрнипе те, апатлану пахалăхĕ тĕлĕшпе те кăмăллă.

Коллективсенче пулнă май министр çумĕ Н.А. Осипова хăйĕн сăмахĕнче сывлăха сыхлас ĕçе модернизацилесси епле пыни пирки чарăнчĕ. Халĕ федераллă шайра та сывлăх сиплевĕн тĕрлĕ специалисчĕсем патне электронлă майпа çырăнма май пур. Учреждениесене медицина кадрĕсемпе тивĕçтерессi лайăхланмалла. Мăн Сĕнтĕр больницинче юсав ĕçĕсем ирттерме, оборудовани туянма 8 миллион тенкĕ уйăраççĕ.

Ашшĕ-амăшĕнчен чылайăшне ачасен çуллахи ĕçпе канăвне йĕркелессин ыйтăвĕсем шухăшлаттараççĕ. Шкул ачисем валли лагерьсене кайма путевкăсене вара вĕренӳ пайĕ урлă кăна мар, социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă та илме май пур. Чи малтанах ку пĕчĕкрех тупăшлă çемьесене пырса тивет. Путевкăсемшĕн тӳлемелли виçе те пĕчĕкрех. Хăшĕсене тата çу кунĕсенче санаторипе курорт сиплевĕ кирлĕ пулма пултарать. Вĕсен тăхтаса тăмасăр педиатр патне пырса учета тăрас пулать. Путевкăсемпе тивĕçтерессин йĕркисем пирки социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н.П. Петрова тĕплĕн ăнлантарса пачĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

## Олимпиада

# Любовь Мешкова – виççĕмĕш

Кăçал Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕпе республика Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерстви шкул ачисем хушшинче налук олимпиадине пуçласа ирттерчĕç. Малтанах конкурсăн пĕрремĕш тапхăрĕ районсенчи шкул ачисем хушшинче иртрĕ. Вĕсене 717 вĕренекен хутшăнчĕ.

Пĕрремĕш тапхăр итогĕсемпе Муркаш, Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи 122 вĕренекен хушшинче хăйĕн ушкăнĕнче Муркаш шкулĕнче 11-мĕш класра вĕренекен Любовь Мешкова мала тухса финала хутшăнма пултарчĕ. Кунта та вăл хăйне лайăх енчен кăтартса пачĕ, 3-мĕш вырăн çĕнсе илчĕ. Çĕнтерӳçĕсем асăнмалăх дипломсемпе хаклă парнесене тивĕçрĕç.

**Е. АРСЕНТЬЕВА,**
**налук инспекцийĕн пай пуçлăхĕ.**

# Н.В. Никольский 133 çул тултарнине асăнса

Майăн 19-мĕшĕнче пирĕн паллă ентешĕмĕр, Атăл тăрăхĕнчи халăхсене çутта кăларакан, чăвашсен паллă профессорĕ, «Хыпар» хаçата йĕркелесе яраканĕ Н.В. Никольский çуралнăранпа 133 çул çитрĕ. Çавна май Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕнче çак кун «Тăван чĕлхе аталанăвĕ: йывăрлăхсем тата пуласлăхĕ» ятпа çавра сĕтел хушшинчи калаçу иртрĕ. Ăна районти культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева ертсе пычĕ.

Никольский тесессĕнех вăл йĕркелесе янă «Хыпар» куç умне тухать, çавăнпа та калаçăва çак хаçатăн историйĕнчен пуçларĕç.

Чăваш мĕн ĕлĕкрен ĕçчен халăх пулнă. Çавăнпа та Никольскин пирĕн халăх пурнăçĕнчи пĕлтерĕшне палăртнă май район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов кашнин хăйĕн вырăнĕнче чуна пара ĕçлемеллине палăртрĕ. Муркаш районĕ ял хуçалăх районĕ пулнă май çĕр ĕçĕ тĕп вырăнта пулнине каларĕ. Мĕн авалтанпах чăвашсем вăрманлă ялта пурăннă. Çавăнпа та паян пирĕн çакна асра тытса йывăçсем ытларах лартмаллине асăнса хăварчĕ.

Кашни çыннăн пурнăçĕ мĕнле пуласси тăван чĕлхерен нумай килет. Пĕтĕм пурнăç илемĕпе пĕлтерĕшне çын шăпах ун урлă ăнланса илет, тăван чĕлхе урлă çын пулать. Никольский те çаплах шутланă. Районти чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсен медотпĕрлешĕвне ертсе пыракан И.В. Раевская каланă тăрăх тăван чĕлехепе литература учителĕсем ачасем чăваш чĕлхине юратчăр тесе хăйсенчен килнине йăлтах тăваççĕ. Методика пособийĕсене кăларакансем те пур: О.А. Вишнева, Т.М. Майорова (Шомикри тĕп шкул) тата ыттисем. Муркашри вăтам шкулта ачасене чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Е.К. Михайловăн вĕренекенĕсем 3 çул умлăн-хыçлăн республикăри чăваш чĕлхипе литературипе ирттерекен олипиадăра малти вырăнсене йышăнаççĕ.

Чăваш чĕлхин аталанăвĕн йывăрлăхĕсем çинчен калаçнă май Шуашкарти Никольский ячĕллĕ педколледж директорĕн çумĕ З.И. Максимова вĕрентӳ ĕçĕнчи çĕнĕ стандартсем пурнăçа кĕме пуçланă май чăваш чĕлхипе литературине, халăх педагогикине, тăван ен историне вĕрентессипе йывăрлăхсем сиксе тухма пултарассине палăртрĕ. Çавăнпа та район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ку енĕпе республикăри Вĕрентӳ министерствине çавра сĕтел хушшинчи калаçăва хутшăнакансен ячĕпе сĕнӳпе тухмаллине палăртрĕ.

Николай Васильевичăн ырă ятне-сумне çĕклессинче «Хыпар» хаçат нумай тăрăшрĕ. Унăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен 4 томлă кĕнеке кăларчĕ. «Хыпар» издательство çуртĕн генеральнăй директорĕ А.П. Леонтьев çамрăк ученăйсем пирĕн ентешĕмĕр ĕçне татах та тĕпчеме пуçланине палăртрĕ. Хăй те Никольский çинчен тата тепĕр 2 кĕнеке кăларнине пĕлтерчĕ. Юлашкинчен кăларнине Сосновка шкулĕн библиотекине парнелерĕ. Унăн ертӳçи Т.З. Степанова чăвашлăха аталантарассипе татах та тăрăшарах ĕçлеме шантарчĕ. Çавра сĕтел хушшинче калаçакансем татах та пулчĕç. Вĕсемпе пуринпе те шкул ачисем хăйсем килĕшнине пĕлтерчĕç: чăвашла калаçмалла, юрламалла, тăван чĕлхене юратмалла. Вара чăваш нихăçан та пĕтмĕ.

Уяв малалла Купăрляри Никольский ячĕллĕ парка куçрĕ. Пуçтарăннисем Николай Васильевичăн палăкĕ умне чĕрĕ чечексем хучĕç, кунта митинг иртрĕ. Ăна уçнă май Уйкас Янасал ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С.Г. Никифорова вырăнти халăх ентешĕмĕрпе мухтанни, ăна сума суни çинчен каларĕ. Кăçал ав ял халăхĕ Никольский шыв ăсса пурăннă çăла юсарĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов вырăнти Ильич ячĕллĕ хуçалăх та районта малта пынине палăртрĕ. Вăл халăха Никольскин ĕçне малалла тăснăшăн, «Хыпарçăсене» ентешĕмĕрĕн ятне-сумне çӳле çĕклессинче пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăннăшăн тав турĕ.

«Хыпар» издательство çурчĕн генеральнăй директорĕ А.П. Леонтьев хăй вара çапла шухăшлать: Никольский çинчен сахалтан та тата 5 кĕнеке çырма пулать. Кăçал вăл вилнĕренпе 50 çул çитнĕ тĕле Шупашкарта ун ячĕпе палăк уçни вырăнлă пулмаллине палăртрĕ. Ку ыйтупа республика Президенчĕ патне çырупа тухма шантарчĕ.

Митинга пуçтарăннисенчен вара пурте Никольский ĕçне малалла тăсассипе тимлеççĕ. Студентсем ав Никольский çуралнă кунĕ умĕн унăн ячĕпе вулавсем ирттерчĕç. Шкул ачисем çулсеренех районти, республикăри тĕрлĕ конкурссенче малти вырăнсене йышăнаççĕ. Район хаçачĕ те, унăн тĕп редакторĕ А.И. Тихонов каланă тăрăх, «Хыпар» ачиех. Николай Васильевич ĕçне малалла тăсса халăха чăвашла хыпарлать.

Никольскин тăванĕсен ячĕпе В.Н. Ипатьева тухса каларĕ. Вăл Николай Васильевич ырă кăмăллă пулнине палăртрĕ.

– Ырă çынсем паян та нумай. Йышлансах пыччăр вĕсем, – терĕ вăл.

Митинг хыççăн Никольский ячĕллĕ паркра чылайччен илемлĕ юрă-кĕвĕ янăрарĕ. Кунта Сосновка шкул ачисем, вырăнти «Талан» фольклор ушкăнĕ, хăнана килнĕ студентсем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Кил тата хушма хуçалăх





## Ĕçре пиçĕхеççĕ

**Ырă çын пуласси ачаран паллă**

Йывăççине кура çимĕççийĕ. Ваттисен сăмахĕн çак чăнлăхĕ халăх отраслĕн кирек хăш сийĕнче те палăрать. Хуçине кура кил хуçалăхĕ. Çак чăнлăха Шатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкула çитсен те куçран вĕçертейместĕр. Вĕрентекен ĕçне вĕренекенĕсен ӳсĕмĕсем урлă хакласси ырă йăлара та асăннă шкулти технологи урокĕсен вĕрентекенĕ Георгий Витальевич Смирнов **(сăн ӳкерчĕкре)** пирки те урăхла калама çук. 17 çул вăл чунĕпе суйласа илнĕ ĕçре. Чăваш педагогика институтĕн художествăпа графика факультетĕнчен вĕренсе тухнă специалист хăй ĕçĕнче пур вăхăтра та правур. Вĕрентекенĕн тăрăшулăхне кура вĕренекенсен ӳсĕмĕсем те куç умĕнче.

– Ялта пурăнакана пăчкă-пуртă тытма пĕлмесен, алă ĕçĕнчен ютшăнсан намăс та. Ĕç урокĕсенче ачасем çакна ăнланнине куратăп та вĕсене ытларах ăс парас шухăш çуралать. Вĕсенчен пĕр пайĕн тăван килтех ашшĕ-амăш хуçалăхне малалла аталантарса пурăнмалла. Кунта вара мăлатук тытма та, пăта çапма та, илемлĕ хатĕр ăсталама та, пахча çимĕç туса илме те пĕлмелле. Çакăнта ял ачисене пуçламăш хăнăхтарусем парассине хамăн тивĕç тесе шутлатăп, – терĕ уроксенче ачасен аллипе ăсталанă хатĕрсемпе паллаштарнă май Георгий Витальевич. Ăшă кăмăллă арçын тĕрĕс çул суйласа илни тата унăн ăнăçусем умра пулни пирки манăн пĕр иккĕленӳ те пулмарĕ.

Ачасен вĕренӳри ӳсĕмĕсем – учителĕн вĕрентӳри çимĕçĕ. Георгий Витальевич патĕнче ăс пухакансем юлашки çулсенче технологипе республика шайĕнче ирттернĕ олимпиадăра та пĕрре мар малти вырăнсене тухрĕç. «Шырав» наукăпа практика конференцийĕнче 1-мĕш вырăн йышăнни те Шатракассинчи шкул ачисем тĕрĕс çул çинчи пирки калать. Шкул çакнашкал ачасене вĕрентсе пурнăç çулне хатĕрлет пулсан – ял пурăнать.

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Йăран çинче**

## Хăш помидор лайăх?

Пахчасенче ĕçсем малалла пыраççĕ. Çĕр улми лартас ĕç вĕçленет. Сухансем симĕсленме пуçлаççĕ. Кишĕр речĕсем палăраççĕ. Помидор лартма та вăхăт çитет. Анчах хăш сорчĕ лайăхрах-ха?

Салат хатĕрлеме ӳстерекен пысăк çимĕçлĕ хăвăрт пиçекен помидорсем иртĕ çулсенче маншăн хăйне евĕр çĕнĕлĕх пулчĕç. «Пятачок», «Большой брат», «Большевик» сортсем уттисемпе танлаштарсан çурăлманнипе тата виçĕ эрнене яхăн упраннипе палăрчĕç.

Хамăн пахчара вырăн панă «Горожанин» тата «Арктика» помидор гибричĕсем шултрах пулмасан та пуян тухăçпа савăнтарчĕç. Вĕсем йăран илемĕ тата хăвăрт пиçессипе рекордсменсем.

**Л. ФЕДОРОВ.**
Мăн Сĕнтĕр.

**Çĕнĕ сăвă**

## Çуркунне

Эх, суркунне, суркунне,
Нумай кĕтрĕм эп сана.
Хăçан ăшшуна паран?
Савăнтарăн халăхна?
Хĕвел хĕртнĕçем хĕртет,
Кунĕ вăрăмрах пулать.
Çутăлать ирех паян,
Ăнăçа эс хăв каян.
Канма вăхăт та паран
Каç пулсассăн çынсене.
Телевизор пăхтаран
Пуçтарса кӳршĕсене.
Кĕç сывăрма вырттаран,
Анчах ватти, выртиччен,
Кĕнчелине те арлать,
Чăлхисене те çыхать.
Çĕрĕ типнĕçем типет –
Ака-суха вăй илет.
Тырă акать те вырать,
Хресчен кукăль пĕçерет.

**Егор ВАСИЛЬЕВ.**
Якаткасси ялĕ.

**Экономика**

## Хăй хаклăхĕ – 12 тенкĕ

Çур аки анлă вăй илнĕ вăхăт. Килти хушма хуçалăхсенче те ака-суха ĕçĕсем тулли хăватпа пыраççĕ. Ял çыннине вара трактористсем çĕр улми ани сухалаттарнăшăн çултан-çул хаклăрах илни пăшăрхантарать. «Мĕнрен йĕркеленет-ха çак хак?» – ыйтаççĕ вĕсем.

Тишкерӳ тусан çакă палăрчĕ. МТЗ-82 тракторпа çĕр сухаламалли ĕç норми: 7 сехетре – 3 га. Тракторпа 1 га çĕр сухалама 23 литр дизтопливо кирлĕ. Пĕр литрне 22 тенкĕ хакпа шутласан ку сумма 506 тенкĕ пулать. 4 разрядлă трактористa 1 га сухалама 200 тенкĕ тӳлемелле. Тракторпа усă курнăшăн 1 га пуçне 50 тенкĕ амортизаци шутлавĕ тумалла. Çаксемсĕр пуçне кашни гектар çĕр сухаланишĕн 400 тенкĕ услам хушмалла.

Маларах илсе кăтартнă шутлавсем йăлтах пĕр гектар çĕр сухалама пăхнă тăкаксем. Пĕр гектаршăн вăл 1156 тенкĕпе танлашать. Ку суммăна соткăсем çине пайласа пăхсан ял çыннин килти хушма хуçалăхри пĕр сотка çĕрне сухаламалли хăй хаклăх 12 тенкĕпе танлашать.

Хушса тата çакна каласа хăвармалла. Ялсенче суха тăвакан трактористсем налук органĕнче учетра тăнине, вĕсем саккунлă техосмотр тухнине ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен контроллесе тăрсан аван пулмалла.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.**

**«АПК аталанăвĕ» программа**

## 167 кредит илнĕ

«АПК аталанăвĕ» наци проектне пурнăçа кĕртекен программа районта туллин ĕçлесе пырать. Ял çыннисем килти хушма хуçалăха аталантарма çăмăллăх кредитсем илессипе çаврăнăçуллă ĕçлеççĕ. Патшалăхăн çак пулăшăвĕпе усă куракансен йышĕ тăтăш ӳссе пырать. Кăçалхи кăрлач-ака уйăхĕсенче кăна пирĕн район çыннисем килти хушма хуçалăха аталантарма 26 миллион та 758 пин тенкĕлĕх 167 кредит илнĕ. Ку енĕпе Катькас (22 кредит), Турай (20 кредит), Ярапайкасси, Оринин, Çатракасси (14-шар кредит) ял тăрăхĕсенче пурăнакансем уйрăмах пуçарулă.

Асăннă программа ĕçлеме пуçланăранпа пирĕн районта пурăнакан 3218 çын пĕтĕмпе 503,8 миллион тенкĕлĕх çăмăллатнă кредитпа усă курнă.

**Хамăр инф.**

**Ыйту – хурав**

## Çеçкине тăпрапа витмелле-и?

***Манăн пĕлĕш çĕр улми шăтса тухсанах ăна тăпрапа хуплать. Çакă тухăçа ӳстернине пĕлтерет. Сăлтавне тĕплĕнрех ăнлантарса пама май çук-ши?***

**З. ТИХОНОВА.**
Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ.

Çĕр улмине тăпрапа витни чăнах та усă кӳрет. Опытлă пахчаçăсем ăнлантарнă тăрăх кун пек тусан çĕр çемçелет, хурт йышĕ чакать. Çак ĕç çимĕççем симĕсленесрен, фитофторозран хӳтĕлет тата çĕр улмине тăпрапа витни ир пулакан «иккĕмĕш çăкăра» тăм тивесрен сыхлать. Сивĕсем пирĕн тăрăхра çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕччченех пулма пултараççĕ.

Çĕр улми çеçки 5-6 сантиметр çĕкленсен, ретсем палăрма тытăнсан тăпрапа хуплама юрать. Эрнерен вăл çĕнĕрен шăтса тухать. Сивĕсем иртмесен каллех çĕрпе витме тăрăшăр.

Ăсчахсем çирĕплетнĕ тăрăх çак ĕçе пула çулçăпа туна хушшинчен çĕнĕ тымар тухать. Вăхăт иртсен ун çинче çĕнĕ çимĕçсем чăмăртанаççĕ. Калчана тăпрапа мĕн чухлĕ нумайрах витетпĕр, тымарсем çавăн чухлĕ сийĕн-сийĕн йĕркеленеççĕ. Çĕр улми те нумайрах çитĕнет.

Сирĕн пĕлĕш тĕрĕсех тăвать. Агротехникăн çĕнĕ мелĕ тухăçа та ӳстерет, сивĕрен те хӳтĕлет.

**А. ШАРИКОВ, пахчаçă.**
Тереç ялĕ.

**Пахчаçă сĕнĕвĕ**

## Черешня лартатпăр

Паян тĕрлĕ улма-çырла йывăççисемпе пĕрлех черешня та лартма меллĕ вăхăт. Черешня хунавĕ çул çинче кăштах кушса илчĕ пулсан ăна лартиччен 5-6 сехет шывра тытăр.

Черешня тарăн лартнине юратмасть. Паян хунавсене касса кĕскетме юрамасть – кая юлтăмăр. Çитес çуркуннеччен тăхтама тивет. Вăхăт иртнĕçемĕн шалалла ӳсекен туратсене иртмелле пулать. Черешня çинче санитари тасатăвĕ ирттернĕ чух аманнă туратсене иртесси пирки манмалла мар.

Черешньăна кайăк-кĕшĕкрен сыхласси – пахчаçăн тĕп ĕçĕсенчен пĕри. Ахальтен мар çак йывăçа «кайăккĕшĕкĕн чие йывăççĕ» теççĕ. Мĕн кăна вырнаçтармаççĕ пулĕ йывăç çине пахчаçăсем? «Суя» кушаксем те, куç кĕскисемпе фольга хутсем те, елка гирляндисем те, тĕрлĕрен ялавсем те, анчах пурте вĕсем вăхăтлăх кăна. Кайăксем кашни хăрушлăхах хăвăрт хăнăхаççĕ. Çавăнпа та пахчаçăсем паян магазинсенче сутакан сетьсене туянаççĕ. Вĕсем çине кайăксем хуравĕ епле пулĕ – пурăнăпăр, курăпăр.

**Л. ФАДЕЕВ.**

# Ĕнесем кӳпĕнеççĕ: мĕн тумалла?

**Вырăх тухтăрĕпе калаçатпăр**

***Ĕнесене улăх-çарана кăларнипе хĕл йывăрлăхĕ иртрĕ тесе шутламаллаччĕ. Çапли çапла-ха, анчах пĕр йывăрлăх хыçа юлчĕ пулин те ял çыннине тепри куллен шиклентерме пуçларĕ. Паян ялсенче улăх-çарана кăларнă ĕнесем йышлă кӳпĕнни пирки нумай калаçаççĕ. «Люцерна-клевер çине те кĕртмен, анчах мĕн амакĕ хăратать – пĕлместпĕр. Улăхра та пĕр канăç çук», – теççĕ касу çӳрессе тавраннă ял çыннисем. Çав вăхăтрах ялсенче ĕнесем кӳпĕнсе вилнĕ тĕслĕхсем пирки те калаçнине илтме пулать. «Ĕнесем кӳпĕнеççĕ: мĕн тумалла?» – çак ыйтупа вырăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцири вырăх тухтăрĕпе Алина Петровна ФЕДОРОВАПА тĕл пулса калаçрăмăр.***

Ĕнесем кӳпĕннĕ малтанхи тĕслĕхсем ялсенчи килти хушма хуçалăхсенчен кĕтĕве кăларнă ĕнесемпе пулса иртрĕç. Кунта хĕл кунĕсенчи чухăн апатлануран хăвăрт урăх рацион çине куçнине палăртмалла. Зооветеринари вĕрентĕвĕ ыйтнă пек тăвас пулсан çак куçарăва васкамасăр пурнăçламалла. Ĕнесене симĕс апата майĕпен хăнăхтармалла. Улăха каякан вырăхсем умĕнче кормушкăра вĕсем кĕтӳрен таврăнса ирхине тухса кайиччен типĕ утă е улăм пулмалла.

Вырăхсем кӳпĕннин никĕсĕнче – вĕсем хăвăрт йӳçекен апат çини. Çак апат шутне люцерна-клеверсăр пуçне çамрăк симĕс курăк та, кĕрхи культурăсен калчи те кĕрет. Уйрăмах вĕсем çинче ĕнесене ирхи сывлăмпа е çумăр хыççăнах çӳретме, сийĕнчех шăварма юрамасть.

Наркăмăшлă ӳсен-тăран çини те ĕнесене кӳпĕнтерет. Кунашкал курăксен йышне наркăмăшлă упа кĕпçи, аконит, безвременник кĕреççĕ.

Мĕнле палăрать-ха ĕне кӳпĕнни? Вырăх çиме пăрахать, хырăмĕ çине çаврăнса пăхать, курпунланать, хӳрине нумай çапкалашать. Час-час ĕнĕрет, çине-çинех выртса тăрать. Сывлавĕ хăвăртланать, минутра çиелтен 60-80 хутчен сывлать. Ĕнесем çăварĕсене карса сывланине курма пулать, çăвартан сĕлеке юхать. Хырăмăн сулахай енĕ палăрмаллах хăпарса каять. Ĕне кавлемест. Вăл часчас шăма хăтланать.

Мĕнле пулăшмалла-ха ĕнене? Пĕрремĕш пулăшу шутне ĕне хырăмĕн сулахай енне татăк хурса сивĕ шыв ярса ăна тăвалла уттарасси кĕрет. Чир йывăрлăхĕ вăйлансан ветспециалистсем пырса ĕне хырăмне троакарпа шăтарса пулăшу парĕç.

Ĕнесем кӳпĕнсе кайса вилме пултарни вырăх пăхакансем умĕнче тăракан паянхи тĕп хăрушлăх иккене ăнланатăп. Урамра çу уйăхĕн илемлĕ кунĕсем. Çĕр ĕçченĕ çур аки ĕçĕсене вĕçленĕ май вырăх апачĕ хатĕрлесси пирки шухăшлать.

Ĕне кӳпĕнсен кайрĕ пулсан ăна пирвайхи пулăшу пама пĕлни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакна валли пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçисемпе зооветспециалистсен, ял старостисен кĕтӳçсене пĕрремĕш пулăшу памалли эмелсемпе тата инструментсемпе тивĕçтермелле. Çак хатĕрсем килти хушма хуçалăхсенче пулни те кирлĕ вăхăтра вырăх усраканшăн ытлашши пулмĕ.

Мĕн тумалла-ха ĕне кӳпĕнсе кайрĕ пулсан? Инкек тӳсекен вырăха малтанах 10 – 15 грамм сĕт кислоти, 160 – 200 грамм тимпанол, 20 грамм çунтарнă магнези памалла. Каламалла, çунтарнă магнезипе сĕт кислотине çур литр шыва ярса ирĕлтермелле. Тимпанол – усă курма хатĕр препарат. Вĕсем пулмасан ĕнене 2 – 3 литр тин кăна сунă сĕт памалла та кӳпĕннĕ вырăна сивĕ шыв ярса тăмалла. Çур литр шыва 10 миллилитр 70 процентлă уксус хушса ĕçтерни те – специалист пырса çитиччен вырăнлă пулăшу. Ăна е кăна тусассăн та ĕнене нумай уттарасси пирки манмалла мар.

Кӳпĕнсе кайнă ĕнене пулăшу париччен çак инкекрен асăрханма çăмăлрах пулнине манас марчĕ. Ăна касу çӳрекенсемпе кĕтӳ пăхакансен, вырăх пăхакансен тăтăшах асра тытасчĕ.

Милици хроникинчен

# Хăнасем кил хуçине пуртăпа хăратнă

Орининти пĕр арçын патне каçпа хăнасем килнĕ: кӳршĕри арçын тата унăн пиччĕшĕ. Тĕпелте хăналаннă вăхăтра пиччĕшĕпе шăллĕ кил хуçипе хирĕçсе кайçĕ: чышкăласа та илеççĕ, урисемпе те тапаççĕ.

Чулпа перекене çăкăрпа пер тенĕ пек кил хуçи чăтать. Лешсем вара, пĕрпĕриншĕн кар тăракан тăвансем, лăпланмаççĕ. Вĕлерессипе хăратма тытăнаççĕ. Хăнасен аллине пуртă та лекет. Унпа вĕсем пӳртрех сулкалашма пуçлаççĕ. Юрать-ха усал ĕç пулса иртмест.

Уголовлă кодексăн икĕ статйине «ĕçлесе илнĕскерсем» халĕ следствие «хăнара харпăр хăйне мĕнле тытмалли пирки» каласа параççĕ.

# Пĕри – тимĕрпе, тепри – çĕçĕпе

Шаптак ялĕнчи пиччĕшĕпе шăллĕ вара пачах пĕр-пĕрне килĕштермен курăнать. Вĕсем икĕ çăвăр автан пек вăрçма тытăнсан киревсĕр сăмахсемпе перкелешеççĕ кăна мар, пĕри алла тимĕр туя, тепри – çĕçĕ тытать. Кĕçĕнни аслине тимĕрпе ислетет, асли вара ăна çурăмран виçĕ хутченех çĕçĕпе тирет. Хăшĕн явапĕ мĕнлерех пуласси  следствипе суд татса парĕ.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

# Волейболра – аксакалсем

Никольские халалласа

Спорта чăнласа юратакансем майăн 14-мĕшĕнче Ваçкассине пухăнчĕç. 55 çул тултарнă тата аслăрах арçынсем çулсеренех Н.В. Никольский профессора асăнса ирттерекен волейбол ăмăртăвне хаваспах хутшăнаççĕ.

Ку хутĕнче Никольский парнисемшĕн тата унăн ячĕпе ятарласа хатĕрленĕ куçса çӳрекен кубока çĕнсе илес тесе 4 команда вăй виçрĕ: Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх команди, «Ударник», Мăн Сĕнтĕрсем тата Сĕнтĕрвăрри хулин пĕрлештернĕ команди.

Мăн Сĕнтĕр командинче выляна И. Кабуркин («Чи аслă вылякан» номинацире палăрчĕ) ку вăйăсенче волейбол техники питĕ лайăх пулнине палăртрĕ.

«Апрельти ăмăртура 50-ран иртнисемпе вылярăмăр, кунта пухăннисем ăстарах иккен», – пĕлтерчĕ спортсмен.

«Чи усăллă вылякан» номинацире Мăн Сĕнтĕрсен командинчи В. Егорова палăртрĕç, «Чи лайăх хӳтĕлевçĕ» – «Ударникри» А. Шумилов, «Чи лайăх сыхăнтаруçă» – Сĕнтĕрвăрринчи Л. Кузьмин, «Чи лайăх тапăнакан» – «Ильичари» С. Медведев.

Çак интереслĕ вăйăра кубока кил хуçисем çĕнсе илчĕç. Призлă вырăнсенче – «Ударникпа» Сĕнтĕрвăррисем.

Вăйăсене ирттерме пулăшнăшăн район пуçлăхне И.В. Николаева тата вырăнти уйрăм предпринимателе О.Б. Николаева тав тăватпăр.

**Г. ЛУКИН,**
**спорт ветеранĕ.**

ГИБДД пĕлтерет

# Ачасен сывлăхĕшĕн пурте явапллă

«Тимлĕ пулăр – ачасем» ятпа иртекен профилактика операци майăн 16-мĕшĕнче пуçланчĕ.

Ăна çул-йĕр çинчи инкексем ачасем хутшăннипе сахал мар пулнăран ирттереççĕ. Акă республикăра кăçалхи тăватă уйăхра кăна 16 çула çитмен ачасем хутшăннипе çулсем çинче 47 инкек сиксе тухнă. Вĕсенче 51 ача суранланнă. Пирĕн районта çак тапхăрта 4 инкек пулса иртрĕ, вĕсенче 6 ача суранланчĕ.

Çавăнпа та çакăн пек лару-тăрăва аталанма парас мар тесе халĕ, вĕренӳ çулĕ вĕçленсе пынă май тата çуллахи каникулăн малтанхи кунĕсенче, профилактика мероприятийĕсем ирттерçĕ. Вĕсен шутĕнче – районти патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн сотрудникĕсем ачасемпе тĕл пулса каласусем ирттерни те.

Инспекторсем автомашинăсенче ачасене лартса çӳремелли ятарлă креслосем пурри çине, хăрушсăрлăх пиçиххийĕсемпе кăкарăннине те тимлĕ тĕрĕслĕç. Акă республикăра юлашки вăхăтра пулса иртнĕ инкексене ачасене суранлассинчен шăпах ятарлă креслосем сыхласа хăварнă.

Аслисен вара çул çинчи инкексенчен ачасене кашни кунах асăрхаттармалла – велосипедсемпе ярăнакан ачасене асфальт çулсем çинче часчасах курма май килет. Уйрăмах каç енне. Çул çитмен ачасемшĕн явапллă пулнине ашшĕ-амăшĕн пĕр самантлăха та манмалла мар.

**А. ЩЕРБАКОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн пропаганда пайĕн инспекторĕ.**



**МОТОБЛОКИ**
**Навесное оборудование, прицепы к мотоблокам**
0% за кредит 0% первый взнос 24 срок кредита, мес
МОТОБЛОКИ от 15 000 руб.
БЫТОВАЯ ТЕХНИКА Лидер
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ
**ШИРОКИЙ ВЫБОР, ВЫГОДНЫЙ КРЕДИТ, ДОСТАВКА!**
**с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4.** 2-10.

**27 мая с 8-00 до 16-00 часов в районном Доме культуры Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Беларусской фабрик и других Российских производителей.** 4-5.

**ООО «Металл-строй» изготавливает и продает теплицы разных размеров, банные печи, профнастил, сетки-рабицы, кованные заборы, ворота, трубы разных диаметров и т. д. Тел.: 8-937-390-73-51. Адрес: с. Моргауши, ул. Заводская, д. 14 (бывший плодоовощной комбинат).** 4-5.

**ООО «ВИВАТ»**
**Изготовление высококачественных деревянных окон типа «Евро» и ОСП на заказ по самым низким ценам в Чувашии. Сертифицировано. Гарантия до пяти лет на лакокрасочные материалы.**
***Замер, установка, монтаж откосов.***
***Магазин «Окна и двери» на ул. Чапаева, д. 37/1.***
**Тел.: 8(83541)62-5-86, 8-917-67-94-733.**
**Деревянные окна – символ достатка, престижа и хорошего вкуса!** 4-5.

**Продаю отрубь, доставка, недорого. Тел.: 8-906-384-48-30, 8-927-990-39-08.** 5-5.

**Продаю: металлочерепицу импортную, отечественную гибкую черепицу, профнастил кровельный, стеновой, сайдинг импортный, отечественный, гидро-, пароизоляцию. Консультация, замер, расчет, доставка, монтаж, скидки. Без выходных. Тел.: 8-917-658-84-56, 8-927-665-37-68.** 4-5.

Тав тăватпăр

Атапай ялĕнче пурăннă Константин Филиппович Волкова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхне Н.И. Никитина, Муркаш шкул директорне В.В. Ялушкинпа поварсене, «Визитра» ĕçлекен Л. Николаева, мĕн пур тăвана, юлташĕсене, пĕрле ĕçленисене, ял-йыша, пынă пĕтĕм халăха чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**ВОЛКОВСЕМ.**

Çу уйăхĕн 2-мĕшĕнче хамăн 60 çулхи юбилее Муркаш райповĕнчи «Радуга» кафере савăнăçлăн паллă турăм. Ачамсемпе тата вĕсен çемйисемпе, сывăх тăванăмсемпе, хурăнташсемпе тата ял çыннисемпе çак савăнăçлă куна мана чăн-чăн уяв пек ирттерме пулăшнăшăн кафе ĕçченĕсене пысăк тав сăмахĕ калатăп. Тамара Ивановна Колбасова аслă поварпа вăл ертсе пыракан ĕç коллективĕн ĕмĕчĕсем пурнăçланччăр, сывлăхĕсем ан хавшаччăр. Ĕçпе ырă сăмаха тивĕçнĕскерсен нихăçан та ырă ятран иртмелле ан пултăр. Çĕре çити тайма пуç сире!

**Шурчара пурăнакан З. РОМАНОВА.**

**Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, торф с доставкой. Скидки. Тел.: 8-927-668-70-15.** 10-12.

**Продаем: асфальт, торф, песок (речной, карьерный), ОПГС (гравмасса), щебень (гранитный, известковый), керамзит, сосновые жерди.**
**Тел.: 44-22-24, 8-903-358-22-24, 8-905-343-91-07.** 1-6.

**Изготавливаем и устанавливаем деревенские ворота, калитки, заборы, полисадники. Дешево. Пенсионерам – скидки. Тел.: 8-905-340-20-30, 38-75-74.** 1-6.

**Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР».**
**Установка, гарантия. 6800 руб.**
**Тел.: 8-905-345-77-19.** 1-5.

**БЕТОН, РАСТВОР любых марок.**
**Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.**
**Песок, ОПГС (гравмасса), щебень.**
**Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.**
**Доставка миксерами, самосвалами.** 16-50.

В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы, грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады).
Питание, проживание предоставляются.
Вахта. З/п от 20000 руб. (сдельная).
Тел.: 8(8352)23-22-22. 2-5.

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
*Немецкое качество*
Окна STAR
**6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного**
подробности по телефонам:
*скидки до 35%*
**8927667 6644**
Пенсионерам доп. скидки
**Офис продаж в здании рынка с.Моргауши**
*Окна стали дешевле...*

**Прогноз погоды с 21 по 27 мая 2011 года** www.yandex.ru

| сб 21 | вс 22 | пн 23 | вт 24 | ср 25 | чт 26 | пт 27 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| переменная облачность, небольшой дождь | облачно, временами дождь | малооблачно | облачно | ясно | ясно | малооблачно |
| +20 | +19 | +19 | +21 | +20 | +23 | +24 |
| +11 | +12 | +9 | +9 | +11 | +15 | +17 |

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84.** 5-5.

* * *

**Отруби, комбикорма, ячмень. Доставка от 1 т. Тел.: 89603013479.** 4-5.

* * *

**Проекты зданий и инд. домов, электро- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Инттехс». с. Моргауши, ул. Мира, 9А. Тел.: 62-6-03.** 4-5.

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус, цемент, шифер, профнастил (крашеный, оцинкованный). Обращаться: «Рука мастера», с. Моргауши.**
**Тел.: 8-903-346-40-58.** 2-5.

* * *

**Пăрусем, вăкăрсем, сурăх, така туянатпăр.**
**Тел.: 8-903-063-07-57.** 1-2.

* * *

**Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15.** 3-5.

* * *

**Пĕрре пăрулана хура-шурă ĕне сутатăп.**
**Тел.: 8-960-300-41-27.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97.** 3-8.

* * *

**Куплю корову, бычка, телку.**
**Тел.: 8-905-342-39-43.** 1-7.

* * *

**Продается битый кирпич-щебень от 500 руб за куб. м. Самовывоз, доставка. Тел.: 8-905-340-19-25.**

* * *

**Продаем: блоки керамзитобетонные, пенобетонные, тротуарную плитку, сетку-рабицу. Качественно, недорого. От производителя ООО «Промсварка».**
**Тел.: (8352)36-01-03, 36-01-06.** 5-5.

* * *

**ООО «Строитель» реализует керамблоки пропаренные. Обращаться по тел.: 63-1-19, 69-8-59.** 4-4.

* * *

**Продаем доски: обрезные, необрезные, брус любого сечения, срубы из оцилиндрованного бревна. Доставка бесплатно. Тел.: 8-919-679-18-11.** 5-5.

* * *

**Требуются рабочие на ленточную пилораму. Вахта. Сокольский район, Нижегородская область.**
**Тел.: 8-904-903-55-80.** 2-2.

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп.**
**Тел.: 8-905-343-60-63.** 2-5.

* * *

**ТЦ «Лотос» продает: профнастил, трубы для столбов, сетку-рабицу, профиль, банные печи, мотоблоки и прицепы. Доставка и сварочные работы (д. Рыкакасы). Тел.: 8-917-665-27-26.** 2-5.

* * *

**Продаю пропаренные качественные керамзитобетонные блоки, песок речной, гравмассу, керамзит, цемент. Адрес: «Моргаушагропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78.** 2-5.

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:270901:144, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:270901, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6500 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**Продается речной песок, гравмасса. Доставка. Недорого. Тел.: 8-927-858-13-50.** 1-5.

* * *

**Продаю лошадь, цена договорная.**
**Тел.: 8-906-131-68-64. Ирина.**

* * *

**Продаю песок, гравмассу, щебень, торф. Доставка.**
**Тел.: 8-961-344-08-38.** 1-5.

* * *

**Продаю пятистенный деревянный дом в хорошем состоянии в д. Сюмеркасы. Самовывоз, цена договорная. Тел.: 8-960-314-70-04.**

* * *

**Реализуем песок речной, щебень разных фракций по низким ценам. Возможна доставка.**
**Тел.: 8-937-384-06-50.** 1-12.

**ИП Иванов В.И.**
**Изготовление высококачественных пластиковых окон на заказ по самым низким ценам в Чувашии. А также межкомнатные и металлические двери. Продукция сертифицирована. Гарантия.**
***Замер, установка, монтаж откосов.***
***Магазин «Окна и двери» по ул. Чапаева, д. 37/1.***
**Тел.: 8(83541)62-5-86, 8-917-67-94-733.** 4-5.

Муркаш райпо коллективĕ хатĕрлев кантурĕн склад заведующийĕнче ĕçлекен В.Л. Салдакеевăн

**АМĂШĔ**

вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата сывăх çыннисемпе пĕрле пĕтĕм чун-чĕререн тарăннăн хурланнине пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службӑн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 20.05.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4337.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.